

# СУЙЛАВ ЯЛАНАХ ПУР!



сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Ирина Яковлева.

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## Сиенлĕ йăлана «çук!» теме пĕлмелле

**Пурнăç кустăрмине хăш еннелле çавăрассине этем ялан тенĕ пекех хăй суйлать. Тӳрĕ кăмăлпа, чыслăн иртерет-и кун-çулне, е çынна усал туса, путарса çиеле тухма тăрăшать-и – пĕтĕмпех мораль хаклăхĕсенчен килет. Е тата теприсем айванлăхне, ăс-хакăл чухăнлăхне пула сиенлĕ йăласен чури пулса тăраççĕ.**

Сăмахран, ăс-тăна улăштаракан наркотиксен витĕмне кĕрсе ӳкенсем сахал мар. Хăйсен ĕмĕрне кĕскетни çеç мар, вĕсен çывăх çыннисен, тус-пĕлĕшĕсен пурнăçĕ те чĕр тамăка çаврăнать. Вĕсене усала явăçтаракансемшĕн вара çакă ырлăх – пысăк укçа паракан услам. Çавăнпах ĕнтĕ обществăри ку проблемăн сивĕчлĕхĕ çултан-çул чакмасть. Ăна хирĕç тăрасси те тĕп ыйтусен шутĕнчен тухмасть.

Пирĕн районта сиенлĕ пулăма сарăлма парас мар тесе ятарлă программа ĕçлет. Асăрхаттару мероприятийĕсем (туринчен ытла – çамрăксемпе) унпа килĕшӳллĕн пурнăçланаççĕ. Наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе кĕрешме профилактикăн мĕнпур субъектне явăçтарнă. Çапах ку ĕçе чи пысăк тӳпе хываканĕсем – районти йĕрке хуралçисем. Вĕсен кулленхи тимлĕхĕнче – сывлăхпа пурнăçшăн хăрушă веществосене саккунсăр сарассине чарасси, наркотиклă ӳсентăрансене çитĕнтерекен лаптăксене тĕп тăвасси тата айăплисене яваплăха тыттарасси. Паллах, ку наркăмăшлă хатĕрсемпе усă куракансене палăртассипе те тимлеççĕ полицейскисем, вĕсене наркотик «хистенипе» преступленисем тăвасран асăрхавра тытаççĕ.

«Вурнарский» пайăн полици пуçлăхĕн заместителĕ Андрей Сорокин наркотике хирĕç тăрассипе тимлекен комиссин иртнĕ ларăвĕнче пĕлтернĕ тăрăх, пĕлтĕр наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă 12 преступление тупса шута илнĕ. Кăçал вара январь–февраль уйăхĕсенче ку ушкăнри уйрăмах йывăр пĕр преступлени пулнă-мĕн. Иртнĕ çулхи тишкерӳ районта ытларах каннабис тата синтетика ушкăнĕсенчи веществосем тĕл пулнине кăтартать. Пĕрремĕшĕсене, тĕпрен илсен, район территорийĕнчех ӳстернĕ тĕслĕхсем пур. Иккĕмĕшсем, пĕчĕк виçепе пулин те, хуласенчен кӳрсе килнипе лекеççĕ.

Сиенлĕ серепене çакланнă çынна хăй тĕллĕн унран хăтăлма йывăр, ятарлă специалистсен пулăшăвĕ кирлĕ. Вăрнар район тĕп больницинче, акă, март вĕçĕ тĕлне учетра 28 çын шутланнă. Вĕсенчен иккĕшĕ – чăннипех те наркоманипе йывăр чирлисем. Кунсăр пуçне 7 çынна, административлă ĕçсене тишкернĕ май, суд йышăнăвĕпе наркотиксенчен тĕрĕслеме тата сипленме тивĕç хунă. Полици пайĕн оперативлă учетĕнче вара шанчăксăр шутланакан граждансем тата нумайрах – саккунсăр çаврăнăшпа çыхăнма пултарнă 39 çын. Вĕсем кунсеренех тĕрĕслевре.

Ăс-тăна минретекен веществосем сарăлакан çул-йĕрсене, сăлтавсене сирме пуренлĕн тăрăшаççĕ пулин те, киревсĕр тĕслĕхсем пурĕрех тĕл пулаççĕ. Кăçалхи январь–февраль уйăхĕсенче кăна тĕрĕслев витĕр кăларнă 3 çынтан иккĕшĕн наркотик витĕмĕ пурри тухнă. Çак тапхăрта полици сотрудникĕсем РФ КоАП-ĕн 6.9-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе икĕ административлă протокол çырнă.

Психотроплă хатĕрсене кирек хăш ӳсĕмри çынсем хăнăхма пултараççĕ. Анчах та чи пысăк хăрушлăхра – çамрăксемпе ачасем. Вĕсен юраманнине тутанса пăхас, аслисен чарăвĕсене пăсас туйăм вăйлă. Тата ыттисенчен кая юлас килмест, «чăнкăрах» курăнас килет. Çакă илсе çитерет те вĕсене сиенлĕ йăласен тĕнчине. Çирĕплenmен организм вара пушшех хăвăрт «чирлесе» каять.

Çакна ăнланнипех ĕнтĕ, полици ĕçĕ-хĕлĕнче ачасене усал пулăмсенчен хӳтĕлесси пĕрремĕшле тĕллевсен шутĕнче. Чи малтанах сотрудниксем профилактика учетĕнче тăракан çамрăксемпе анлă ĕçлеççĕ. Вĕсене тĕрĕслесе тăнипе кăна çырлахмаççĕ, кашни тĕлпулурах наркотиксен сиенĕ çинчен ăнлантараççĕ, вĕсене хатĕрленĕшĕн-сутнăшăн, ăша хывнăшăн тивекен яваплăх пирки тĕплĕн асăрхаттараççĕ. Çакăн евĕр калаçусене вĕренӳ заведенийĕсенче тăтăш йĕркелессине те йăлана кĕртнĕ.

Оперативлă лару-тăрăва лайăхлатма районта кăçал та тĕллевсене çирĕп палăртаççĕ. Профилактика субъекчĕсем умĕнчи задачăсем паллă: чи кирли – наркотиксемпе ун евĕр япаласене халăхра сивлени пулмалла. Ачасене те çак шухăша ăса хывса сиенлĕ йăласенчен хӳтĕлеме хăнăхтармалла. Пĕлтерĕшлĕ ĕçе мĕнпур общественноç хутшăнсан витĕмĕ курăмлăрах пулĕ.




Элмен Сунарти акци вăхăтĕнче.

## Тĕллевĕсем пĕлтерĕшлĕ

**Пĕтĕм Раççейри «Ăçта вилĕм сутаççĕ, пĕлтер!» акцие Вăрнар районĕ çулсеренех активлă хутшăнать. Ун тĕллевĕсем – наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă информацие пухасси, инкеке лекнисене квалификациллĕ пулăшу тата сиплев парасси. Кăçал акцин пĕрремĕш тапхăрĕ мартăн 14–25-мĕшĕсенче иртрĕ.**

Район администрацийĕн информацийĕ тăрăх, мероприятисен программи тĕрлĕеннĕхпе уйрăлса тăнă: шкул ачисемшĕн усăллă калаçусемпе сывлăх урокĕсем, класс сехечĕсем, культура ĕçченĕсем йĕркеленĕ викторина-тĕлпулусем...

Палăртмалла, вĕренӳ заведенийĕсенчен Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕ пуринчен активлă пулчĕ. Тĕрлĕ ушкăнри çамрăксемпе ĕçленĕрен кунта сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассине мала кăлараççĕ. Хальхинче те акци йĕркипе студентсемпе районти тĕп больницăн наркологĕ, полицин, ытти службăсен представителĕсем тĕл пулчĕç. Хăйсене тĕрĕс мĕнле тытмалли, сывлăха упрамалли, саккуна пăсма юраманни çинчен сăмах пуçарчĕç.

Общественăлла пĕлтерĕшлĕ тивĕçрен ял-хула поселенийĕсем те аякра юлман. Кашнинчех «Наркотиксене хирĕç!» чĕнӳпе профилактика мероприятийĕсем ирттернĕ, вĕсене вырăнта пурăнакансен пысăк пайне хутшăнтарнă. Асăмçырми, Калинино тата ытти тăрăхсенче, сăмахран, специалистсем ăнăçсăр çемьесене рейдпа çитнĕ, хăрушлăх ушкăнĕнчи ачасемпе уйрăммăн калаçнă. Вилĕм кӳрекен усал йăларан асăрхаттаракан информаци сехечĕсене вара мĕнпур культура çуртĕпе библиотекăра йĕркеленĕ.

«Ăçта вилĕм сутаççĕ, пĕлтер!» акцин тепĕр тĕп шухăшĕ – пĕтĕм çынна наркотик сиенĕпе кĕрешме явăçтарасси, çав шутра анонимлă майпа та. Çак тĕллевпе районти вĕренӳ заведенийĕсен, ял-хула тăрăхĕсен çуртĕсенче, район администрацийĕнче информаци пухмалли ятарлă ещĕксем вырнаçтарнă. Мĕн те пулин пĕлсен информацие (çав шутра – вăрттăн та) унта хăварма май пур.

## Пурнăç хаклăрах

**Сывлăхран хакли ним те çук тетпĕр. Апла-тăк пĕлмен транспортпа çула тухса ăнсăртран тупăннă водителе пурнăçа мĕнле шанма пулать-ха? Ку пассажирсем чăнах та хăйсене пысăк хăрушлăха кĕртсе ӳкереççĕ.**

Официаллă перевозчиксен çынсене турттарассипе çирĕп йĕркене пăхăнмалла. Вĕсен транспорт юсавлăхĕ те асăрхавра, водительсем рейс умĕн медицина тĕрĕслевне тухаççĕ тата ытти те. Саккуна пăхăнмасăр çынсене илсе çӳрекенсем вара вĕсен хăрушсăрлăхне шантараймаççĕ. Пĕрремĕш вырăнта вĕсен яваплăх мар, ытларах тупăш тăвасси.

Пассажир тивĕçтерĕвĕсемшĕн ку водительсем йӳнĕрех ыйтаççĕ-ха ĕнтĕ – çакăнпа илĕртеççĕ те. Халĕ Интернета кăна кĕр, кирек мĕнле вырăна пĕрле каймa йыхравлакансене тупма пулать. Пĕлтерĕвĕ ăмсанмалла пулсан та, ун хуçипе çыхăнниччен лайăх шутлани пăсмасть. Пĕрремĕшĕнчен, мĕнле çын тĕлне лекетĕр, пĕлместĕр – тем тĕрлĕ усал шухăшли те пур. Иккĕмĕшĕнчен, кăшт укçа перекетлессишĕн пурнăçпа выляма кирлĕ-ши? Инкеклĕ тĕслĕхсем тем чухлех.

Март вĕçĕнче, акă, республикăри автоинспекторсем çул-йĕр юхăмĕнче «Датсун» автомашинăна чарнă. Документсене ыйтсан водитель вуçех урăх çыннăн удостоверенине кăларса кăтартнă. Паллах, туртса илнĕ ăна сотрудниксем.

Ахальтен мар ют правасемпе вĕçтерсе çӳренĕ иккен вăл. Хăйĕнне унччен маларах, эрех ĕçнине палăртма тĕрĕслев тухма хирĕçленĕшĕн, туртса илнĕ пулнă. Айăплав вăхăчĕ иртсен те, хушнă условисене пурнăçламан пирки, удостоверение таврăйман.

Чи тĕлĕнмелли вара – çакă сĕмсĕр водителе çынсене тӳлевлĕ турттарма пачах та чăрмантарман. Автоинспекторсем чарнă чух машина салонĕнче пĕр пассажир пулнă. Вăл çула май каякан транспорта Интернетри ятарлă приложени тăрăх шыраса тупнине пĕлтернĕ. Ăнсăртран лекнĕ водитель руль умне ӳсĕрле ларкаланине те, документсемсĕрех çула тухнине те чухламан та, паллах...

Çавăнпа та Чăваш ен автоинспекцийĕ çине-çинех асăрхаттарать: саккунлă перевозчиксен тивĕçтерĕвĕсемпе кăна усă курăр. Çынсене вăрттăн турттаракан водительсене çула тухас умĕн никам та тĕрĕслемест, машина юсавлăхĕ тĕлĕшпе те шанчăклăх çук. Çитменнине, инкек тухас-тăк, суранлансан та сиплев тăкакĕсене саплаштараймастăр: сирĕн пурнăçа никам та страхламасть.

## Улталанас мар тесен

**Час-часах социаллă сетьсенче е тата e-mail урлă пулăшу ыйтнине куратпăр. Анчах мошенниксем мар-ши вĕсем – хăшĕпĕрисене çакă та хăратать.**

Улталанас мар тесен тимлĕ пулмалла:

➜ Ыйтаканĕ – уйрăм çын, эсир ăна пĕлместĕр-тĕк, кунашкал пĕлтерĕве ан хуравлăр. Укçана уйрăм çынна куçарса парсан, ăна чăннипех кама та пулин пулăшма тăкакланине эсир тĕрĕслейместĕр.

➜ Ыйту авторĕ коммерциллĕ мар организаци пулсан, ун шанчăклăхне тĕрĕслемелле.

- Унăн сайчĕпе социаллă сетьри страницисене тĕплĕ тишкерĕр (миçе çул ĕçленине, хыпарсене тăтăш вырнаçтарнине, çыхăнмалли даннăйсене, финанс отчечĕсене, ыттисене).
- Тимлĕ пăхăр, реквизичĕсем шанчăклă-и? Уççăн ĕçлекен организацисем укçана расчет счечĕ çине пухаççĕ.
- Мушенниксем тӳлевсене пухма электронлă енчĕксемпе тата уйрăм çынсен банк карттисемпе усă кураççĕ. Çакă сисчĕвлентермелли самант.
- Шулĕксен пĕлтерĕвĕсем ялан тенĕ пекех тĕрлĕ тĕслĕ, тӳрех куçа илĕртеççĕ. Пулăшу ыйтакансен сăмахĕсем те чуна пырса тивмелле. **Анчах ан улталанăр – кирек мĕнле информацие те тĕрĕслеме хăнăхăр!**

## Яваплăх çинчен самантлăха та манма юрамасть

**Çанталăк улшăнуллă тапхăрта шыв-шур тавраш пуриншĕн те хăрушă. Уйрăмах – выляма-аташма юратакан, асăрхавсăр юлнă ачасемшĕн.**

Унчченхи çулсенчи статистика кăтартнă тăрăх, шел те, çурхи шыв кайнă чух çынсем аманнă-вилнĕ тĕслĕхсен шучĕ ӳсет. Пĕвекӳлĕсем, юханшывсем çывăхĕнчи спорт занятийĕсем, вăйăсем вăхăтĕнче çула çитменнисем инкеке лекни те пулнă.

Хăрушлăх тапхăрĕнче ашшĕ-амăшĕн, кĕçĕннисен воспитанийĕшĕн тивĕçлĕ ытти çынсен яваплăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ: вĕсен ачасене хӳтĕлеме васкавлă мерăсем йышăнмалла. Чи малтанах – çула çитменнисене шывшур хĕррипче ирĕклĕн çӳреме чармалла.

Аслисен те асăрханулăх çинчен манма юрамасть, уйрăмах – пулăçсен. Юратнă туртăм темле илĕртсен те – пурнăç хаклăрах.

Пурте пĕлекен ансат правилăсене пăхăнни пысăк инкекрен çăлса хăварĕ.

**Раççей Следстви комитечĕн республикăри Следстви управленийĕ.**